25-мěш çул тухать. Хакě 15 пус.

1942
АВГУСТ
7
ЭРНЕКУН
183 (6118) №

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

Совет Информаци Бюровěнчен

Августăн 5-мěшěнчи каçхи пěлтерÿ

Августăн 5-мěшěнче пирěн войскăсем противника хирěç **Клетская, Котельниково** районěсенче тата **Белая Глинăран** кăнтăрарах, **Кущевскаяран** кăнтăрарах вырăнсенче хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокěсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Августăн 4-мěшěнче пирěн авиацин чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче нимěçсен 40 çити танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 ытла автомашинине, боеприпассем тиенě 100 çити лавне, горючи тултарнă 4 автоцистернине пěтерсе тăкнă е сиенленě, боеприпассен 4 складне тата горючи усракан пěр склада сирпěнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 20 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, пěр пайне пěтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районěнче пирěн войскăсем противника хирěç çапăçнă. Нимěçсен пехоти, танксемпе бронемашинăсем пулăшса пынипе, пирěн позицисене темиçе хутчен те атакăланă. Пирěн боецсем нимěçсен çав атакисене сирсе пăрахнă. Çав çапăçусенче противникăн 8 танк тата салтакěсемпе офицерěсем 1.200 çынна çити пěтнě. Клетскаяран кăнтăрарах вырăнта танксен çапăçăвě пулса иртнě, çав çапăçура совет танкисчěсем нимěçсен 13 танкне çунтарса янă тата персе çěмěрнě.

* * *

Котельниково районěнче хаяр çапăçусем пынă. Противник унта пысăк вăйсем пухса тăратса пирěн позицисене тăтăшах атакăлать. Питě пысăк çухатусем тÿснипе çеç вăл кăштах малалла куçма пултарнă. Халăх пурăнакан пěр пункт патěнче вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Пункт темиçе хутчен те аларан-алла куçнă. Туллимар данăйсем тăрăх çав участокра нимěçсен 12 танкне, 28 автомашинине тата 400 ытла гитлеровеца пěтерсе тăкнă.

* * *

Белая Глинăран кăнтăрарах вырăнта пирěн войскăсем противникăн танкěсемпе мотопехотине хирěç оборонăллă вăйлă çапăçусем туса пынă. Участоксенчен пěринче хаяр çапăçусем пулса иртнě хыççăн пирěн чаçсем çěнě рубежсем патне чакнă. Тепěр участокра противникăн автоматчикěсен пысăк отрячě пирěн чаçăн тылне кěрсе кайнă пулнă. Хăвăрттăн мерăсем йышăнса нимěçсен автоматчикěсене хупăрласа илнě те пěтěмěшпех вěлерсе пěтернě. Кущевскаяран кăнтăрарах районра пирěн войскăсем противникăн йышлă атакисене сире-сире пăрахнă. Н-ски чаçăн участокěнчех нимěçсен 6 танкне, 4 орудине, 26 пулеметне пěтерсе тăкнă, çапăçу хирне нимěç салтакěсемпе офицерěсен виллисем 600 ытла выртса юлнă.

* * *

Сурçěр-Хевеланăç фронтěнче авиаци кěрешнě тата артиллерирен персе тăнă. Советăн хăвăрт вěçекен 7 бомбардировщикě Перлик юлташ ертсе пынипе противникăн юханшыв урлă каçмалли вырăнне аркатса тăкнă. Летчиксен Артемов юлташ ертсе пыракан группи тăшманăн аэродромě çине вěçсе кайса тапăннă, çавна май тăшманăн аэродромě çинче боеприпассен складне сирпěнтерсе янă тата 18 вырăнта пушар тухнă. Сывлăшри çапăçусенче нимěçсен 2 самолетне персе антарнă.

* * *

Карели фронтěнче Белоусов юлташ командир пулса тăракан чаçри летчиксен группи противникăн аэродромě çине сасартăк вěçсе кайса тапăннă. Нимěçсен 14 самолетне пěтерсе тăкнă. Кăштах вăхăт иртсен çав чаçри летчиксемех, Фомин юлташ командир пулса тăракан чаçри летчиксемпе пěрле пулса, противникăн «Мессершмитт — 109» йышши 12 самолечě ларакан аэродромě çине татах та тепěр хут вěçсе кайса тапăннă. Пилотсем Чебичковпа Бакулин юлташсем нимěçсен вěçсе хăпарма тăнă икě самолетне персе антарнă. Çав çапăçура нимěçсен 7 истребительне пěтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçěнче кěрешекен Т. юлташăн партизанла отрядěнчи партизансен группи нимěçсен çар эшелонне ÿпěнтерсе янă. 14 пассажирски тата 10 товарнăй вагонсем пěтěмěшпех çěмěрěлсе пěтнě. 150 метр тăршшě вырăнта чугунçул линийě арканнă. Нимěçсен фашистла оккупанчěсем 300 çын ытла вилнě тата аманнě.

* * *

Нимěçсен 4-мěш истребительнăй эскадринчен тыткăна лекнě унтер-офицер Вилли Треттер çапла каласа панă: «Эпě фронта нумаях пулмасть кăна килсе çитнě. Вырăссен летчикěсем мана малтанхи çапăçурах персе антарчěç. Пирěн ватă летчиксем çапла калаççě: вырăссен летчикěсемпе çапăçма йывăртарах та йывăртарах пулса пырать, теççě. Вырăссен авиацине пěтерсе тăкнă тесе пире пěрмаях калатчěç. Совет самолечěсем Кенигсберг çине вěçсе пырса тапăнни çавăнпа та питех те тарăн шухăша ячě. Вырăссен бомбардировщикěсем пирěн çавăнти çар объекчěсене питě те вăйлăн ишěлтерсе сиенленě тесе калаçаççě»

* * *

Нимěçсен салтакě Вальтер Шерпен патне Саар облаçěнчен Курт Герелен çапла çырать: «Вăрçă пирěнне юлашки вăя пěтерет. Ывăнса ним пěлми пуличченех ěçлеме тивет, çимелли вара нимěн те çук. Хресченсене мěн пуррине йăлтах туртса илсе кайнă. Анчах та жалоба пама юрамасть. Пěр ытлашши сăмах каласанах пěтетěн. Çавнашкал çынна критикăлакан çын тесе калаççě те, вăл çынăн пурăнасси пулмасть вара».

* * *

Франци патриочěсем Ирсон хули хěрринчи хурçă шăратакан заводри пысăк прокатнăй стана тата виçě мартеновски кăмакана стройран кăларнă. Камбрэре сукно фабрикинче паллă мар çынсем хатěр продукцин складне тивертсе янă. Германие яма хатěрлесе хунă 30 пин метр пусма тавар çунса кайнă.

Августăн 6-мěшěнчи ирхи пěлтерÿ

Августăн 6-мěш ыран тенě чух çěрле пирěн войскăсем противника хирěç **Клетская, Котельниково** районěсенче, **Белая Глинăран** кăнтăрарах тата **Кущевскаяран** кăнтăрарах вырăнсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокěсенче нимěнле улшăнусем те пулман.

* * *

Клетская районěнче пирěн войскăсем, противникăн чылай атакисене сире-сире пăрахса, хăйсем йышăннă рубежсене çирěппěн тытса тăнă. Халăх пурăнакан пунктшăн пынă çапăçура Н-ски часть нимěçсен танкне, 3 орудине тата 300 гитлеровеца çити пěтерсе тăкнă. Пěр участокра пирěн танкистсем тăшманăн тылěсене кěрсе кайса рейд тунă, противникăн войскăсемпе боеприпассем турттарса пыракан автоколоннине çапса аркатнă. Нимěçсен 38 автомашинине тата салтакěсемпе офицерěсене 250 çынран кая мар пěтерсе тăкнă.

* * *

Белая Глинăран кăнтăрарахри районра пирěн войскăсем противникăн наступлени тăвакан танковăй тата мотопехотнăй чаçěсене хирěç пěр чарăнмасăр хаяррăн çапăçнă. Пирěн войскăсем, тăшмана хирěç çапăçса, çěнě рубежсем патне чакнă. Кущевскаяран кăнтăрарах вырăнта пирěн противотанковăй артиллери тата бронебойщиксем нимěçсен 8 танкне, 4 бронемашинине тата 21 автомашинине пěтерсе тăкнă. Тепěр участокра Кубань казакěсем халăх пурăнакан пункт çине, халě кăна гитлеровецсем тытса илнěскер çине, çěрле пырса тапăннă. Хăюллă юланутçăсем противникăн салтакěсемпе офицерěсене 600 çынна ытла касса вакласа пěтернě.

* * *

Брянск фронтěнче противникăн вакă ушкăнěсемпе тытăçусем пулса иртнě. Пирěн пěр чаçри боецсем, неприятеле атакăласа, тăшман йышăннă халăх пурăнакан пункта çěмěрсе кěнě. Урамри çапăçура противникăн салтакěсемпе офицерěсене 100 çынна ытла пěтерсе тăкнă. Разведчиксем, Холодный юлташ ертсе пынипе, çěрле нимěçсен çирěплетнě узелě патне шăвăнса кěнě. Разведчиксем гранатăсем ывăтса икě дзота, 4 блиндажа сирпěнтерсе янă тата 40 гитлеровеца пěтерсе тăкнă.

* * *

Совет Информаци Бюровě июлěн 20-мěшěнче Дивиченко юлташ командир пулса ертсе пыракан самолетăн экипажě геройла ěç туни çинчен пěлтернěччě. Çав операцире пулнă летчиксем Дивиченко юлташăн çунакан самолечě нимěçсен горючи тултарнă автоцистернисем çинелле пынине курнă, вěсем самолетăн экипажě пěтнě тесе шутланă. Самолет экипажěн пурнăçě çинчен паян çěнě хыпарсем илнě: тăшманăн автоцистернисем çине персе вěсене вут хыптарнă хыççăн, Дивиченко юлташăн çунакан самолечě татах та икě километр малалла вěçсе кайса, противник йышăннă территори çине анса ларнă. Самолет çунса кайнă, летчиксем хытă пиççе кайнă. Стрелок-радист Ешов юлташ вилнě. Дивиченко юлташ, штурман Журавлев, стрелок-радист Мысиков юлашкинчен çапах та пирěн войскăсем вырнаçнă тěле çитнě. Хальхи вăхăтра вěсем госпитальре. Совет патриочěсем çапла каланă: «Эпир вилěм аллинчех пулнă, анчах та чěрě юлнă. Ылханлă тăшмана хирěç эпир татах та çапăçăпăр. Пирěн юн тымарěсенче юн çÿреме чарăниччен эпир гитлеровецсене хирěç çапăçма пăрахмастпăр. Пирěн пурнăç тăван çěршывăн аллинче!».

* * *

Партизансен отрячě, Белоруссин нимěçсем оккупациленě районěсенче пě-

Вěçě 2-мěш страницăра

Авăн çапма тăхтаса хěле кěрсе кайсан, Тырпула тăккаласа шăп çуррине çухатан.

Ěç дисциплинине пăсни пулмалла мар

ЙĚПРЕÇ, августăн 5-мěш. (**Телефонпа**). Районри Калинин, Молотов ячěсемпе тăракан, «10 лет Октября», «Трактор», «Коминтерн» тата ытти колхозсем тырă вырас ěçе массăллăн тухса пысăк хăвăртлăхпа туса пыраççě. Колхозниксем пысăк хастарлăхпа ěçлеççě. Ěçре социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

«10 лет Октября» колхоз ыраш вырнă çěрте жнейкăсемпе тата косилкăсемпе анлăн усă курать. Кунта тырă вырма тухнăранпах жнейкăсем куллен пěр чарăнусăр ěçлеççě. 17 çулти çамрăк машиновед И. Данилов, жнейкăпа ěçлеме кăçал пуçласа ларнă пулсан та, кăтартуллăн ěçлет, жнейкăна пěр чарăнусăр ěçлеттерет. Кулленех 5-шер гектар тырă вырса ěç нормине нумай ирттерсе тултарать. И. Данилов юлташ уборкăра 3-мěш бригадăри машиноведпа, Архипов юлташпа, ăмăртса ěçлет. Вěсем иккěшě те вăрçă вăхăтěнчи стахановецсен ретне тăма тăрăшаççě.

Колхозниксемпе колхозницăсем уборкăра кунне-çěрне пěлмесěр ěçлеççě, паянтан малалла уйран кěмесěр ěçлеме тытăнаççě. Колхозăн çапла ěçлеме пур майсем те пур. Пěрлешсе апатланаççě, уя шыв çителěклě илсе пухаççě, культурăллă-массăллă ěç те уйра пулса пырать.

Малта пыракан колхозсен опычěпе районри пур колхозсен те уборкăри ěçсен хăвăртлăхне вăйлăн ÿстерсе пымалла. Ку тěлěшпе ěçре машинăсемпе тата кěрепленлě çавасемпе туллин усă курни пысăк вырăн йышăнса тăрать, колхозниксен пěтěм масси пěр çын пек хастарлăн ěçлени пысăк çитěнÿ тума пулăшать. Çакна районри хăшпěр колхозсем халě те шута илмеççě-ха. «Строитель» колхозěн 2 жнейка, вěсенчен пěри çеç ěçлет. Иккěмěш жнейки тормоз çук пирки ěççěр ларать. Тормоз тума мěншěн те пěр сехет çеç кирлě. Анчах колхоз председателě жнейкăна юсаса ěçе ярас тесе нимěн те тумасть.

Буденный ячěпе тăракан колхозра ыраш «симěс» тесе жнейкăсене паян кун та ěçе кăларман, кěрепленлě çавасемпе çулассине те хакламан. Колхозра ěç дисциплини тÿсме çук япăх. Дисциплинăна бригадирсем хăйсем пăсаççě. Августăн 3-мěшěнче бригадир айăпěпе иккěмěш бригадăран ěçе 45 çын тухман, уйра 5 колхозник çеç ěçленě.

Халě хěрÿ ěç вăхăтěнче кашни сехет пěр кунпа танлашать. Уйра кашни çын ěçлени паха. Уборка вăхăтěнче ěç дисциплинине пăсни — çěршыв умěнче преступлени туни пулать. Çакна Буденный ячěпе тăракан колхоз руководителěсен тивěçлипе ăнланса илес пулать.

Д. МИХАЙЛОВ.

Уборкăри çитменлěхсем

ШАХАСАН. (**Телефонпа, хамăр корр**). Пайкилтри «Активист» колхоз малтанхи виçě кун хушшинче 35 гектар вырчě. Колхозра пěрремěш бригада (бригадирě Елена Петрова) малта пырать, вăл 13 гектар вырса пухнă. Колхозниксемпе колхозницăсем çěрле те, кăнтăрла та тырă выраççě. А. Матвеева, М. Анисимова, П. Тихонова норма тăрăх кунне 0,10 гектар вырас вырăнне 0,20 гектар е ытларах та выраççě. Ěçěн пахалăхě аван, тăкаксем çук. Çак колхозăн ěçěнче çитменлěхсем те пур. Сăмахран, икě жнейкăран пěри çеç ěçлет. Машинист А. Александров кунне 6 гектар вырать. Тепěр жнейка юсавлă мар, унăн кěреплин шăлěсем çук. Кашни бригада валлиех столовăйсем уçнă.

«Победа» колхозăн 3 жнейка ěçлеме юрăхлă, 4 жнейкине халě çеç юсаççě. Юсавлă жнейкăсемпе пěрипе те ырăн усă курмаççě. 9 бригадăран 7 бригадăра çурлапа кăна выраççě. Колхозра кам мěнле ěçленине куллен шута илсе пыни çук. Паянхи куна колхозра мěн чухлě тырă вырнине колхоз учетчикě каласа параймасть. Вăл уйра пулмасть. Агитаторсене уйра курма çук. Колхозниксене медицина енěпе пулăшу парас ěçе те йěркелемен. Колхозница Вера Анисимовăн куçне хăмăл тăрăннă. Анчах ăна пулăшу паман.

Урапасене юсама колхоз 20 стан кустăрма илнě те колхозниксене салатса панă. Кун хыççăн, колхоз правленийě урапасене йěркелесе çитернипе çитерменнине тěрěслемен. Çакна пула колхозăн халě те урапасем сахал.

Уборкăна иртерес ěçри çак çитменлěхсене халех пěтерес пулать.

С. ШАДИН.

Пурне те фронт ыйтнă пек туса пыратпăр

Тырра ăнăçлăн пухса кěртсе государствăна ялхуçалăх продукчěсем ытларах хатěрлесе парассишěн эпир паян тимлěн, çěрне-кунне пěлмесěр ěçлеме тивěçлě. Пирěн колхозри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен пěтěм ěçне фронт интересěсене пăхăнтарса туса пыраççě. Пуян ÿснě тырпула вырса пухнă çěрте ěç тухăçлăхне кунран-кун вăйлатса пыраççě.

«Комбинат» колхозăн хирěсенче кăçал пучахлă тырăсем 480 гектар, пăрçа йышши тырăсем 34 гектар, техникăллă культурăсем 35 гектар, çěрулмипе пахча-çимěçсем 70 гектар тата вăрлăх культурисем 150 гектар вырса пухмалла.

Халě, тăван çěршыв йывăр кунсене пурăнса ирттернě вăхăтра, пирěн колхозниксемпе колхозницăсем çав тырăсене пухса кěртес ěçре дисциплинăна татах çирěплетрěç, пěтěм вăя, пултарулăха тырпула хăвăрт пухса кěртес, государство валли нумай тырă, пахча-çимěç, аш-какай, чěрт авар хатěрлесе парас ěçе хураççě.

Халě эпир хěрсех ыраш выратпăр. Ěçе кулленех кашни колхозник, кашни çамрăк активлăн хутшăнать. Колхозăн 6 жнейка, вěсем пурте ěçре. 270 çын çурлапа, 90 çын кěрепленлě çавасемпе выраççě. Ěçěн тухăçлăхě пысăк. Колхозниксем кăçал нихăçанхи пек мар хастарлăн ěçлеççě. Кěрхи тырăсене колхоз 9 ěçкунě хушшинче пěтěмпех вырса пухма тăрăшать. Паянхи куна çуррине ытла вырнă ěнтě.

Колхоз паян-ыранах авăн çапма тытăнать. Молотилкăсем 4. Вěсем пурте юсавлă, итемсем çинче авăн çапма хатěр тăраççě. Таса та тулăх тырра чи малтан государствăна паратпăр. Колхоз тырă турттарма 24 çынран транспорт бригади организациленě. Бригадăн транспорт инвентарěсем юсавлă, лашасем вăйлă. Транспорт бригади халě уйран кěлте турттарать, вěçех чи малтан çапнă тырра вěсем государствăн хатěрлев пункчěсене леçме тытăнаççě.

Г. КУЗЬМИН,
Çěмěрле районěнчи «Комбинат» колхоз председателě.

Уйхир ěçěнчи стахановецсем

ШАМАРША. (**Телефонпа**). Августăн 5-мěшне районěпе 2500 гектар тырă вырнă. Вăл шутран: комбайнсемпе—40 гектар, жнейкăсемпе—1.161 гектар, çавасемпе—267 гектар, çурласемпе—955 гектар вырса пухнă. 60 гектар çинчи тырра капана хывнă. Августăн 6-мěшěнче «Майăн 1-мěш», «Канаш» тата «Шурăмпуç» колхозсем ыраш вырса пěтереççě.

«Победа» колхозра виçě кун çурă хушшинче ыраш вырса пěтернě, августăн 5-мěш тěлне 38 гектар çинчи тырра çапса тасатнă, 80 гектар çинчен пучах пуçтарнă, ку ěçе шкул ачисем, мěнпурě 40 ача туса пыраççě. Сидоров тата Кольцов машиноведсем кунне 14—15-шер гектар тырă выраççě. 70 çулти София Фомина нормăна 170 процент тултарса ěçлет.

«Правда» колхозра 62 çулти Х. Кузьмин кěрепленлě çавапа кунне 0,7 гектар вырать. «Шурăмпуç» колхозра Мария Кадеева кунне 300 кěлте, Васса Андреева—240 кěлте тырă выраççě.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Ěçлеме мар, канма васкаççě

ÇĚМĚРЛЕ, августăн 5-мěш. (**Хамăр корр.**). Районри чылай колхозсем хěрсех тырă выраççě. Вăрçă вăхăтěнче ÿстернě тырпула тăккаламасăр, вăхăтра пухса кěрессишěн колхозниксем пысăк тимлěхпе ěçлеççě. Ворошилов ячěпе тăракан колхоз ыраш вырса пěтерсе авăн çапма, государствăна тырă пама тытăнчě.

Анчах та районри хăшпěр колхозсем чăтма çук кая юлса пыраççě.

«14 лет Октября» колхоз (председателě Мажуков) паян кун та утă çулса пěтермен, тырăсене вырас ěçре те тÿсме çук юлса пырать. Колхоз малашне те çаплах ěçлесен, паллах, тырăсем тă-

Мěншěн-ха «14 лет Октября» колхозра уйрăмăнах ěçсем япăх пулса пыраççě? Кăнса пěтесси уççăнах курăнса тăрать. Тěп сăлтавě—колхозăн руководителěсем ответлăха туйса ěçлеменнинче, ялхуçалăх ěçěсене вăхăтра туса пыма колхозниксен массине организацилесе пыманнинче, ěç дисциплинине тивěçлě вырăна лартманнинче.

Утă çулнă çěрте 70 колхозника яхăн ěçлет пулин те, утă пухса кěрес плана колхоз çурри ытларах çеç пурнăçланă. Çулман утă кунта татах 20 гектар шутланать. Колхозниксем ěçе хěвел çÿле çěкленсен çеç тухаççě.

Колхоз уборкăна япăх хатěрленсе тухрě. Жнейкăсемпе транспорт инвентарěсене юсаман, молотилкăсене ěçе хатěрлесси çинчен кунта шутламаççě те. Колхозра куллен тимлěн ěçлеме тивěçлě çынсем 142 шутланаççě. Ěçе лайăх организацилесен, ку вăйпа пур ěçе те вăхăтра туса пыма май пур темелле. Анчах тырă выраççипе утă çулассси питех те сÿрěккěн пулса пыраççě.

Уборкăн малтанхи кунěнче тырă вырма виçě бригадăран та 15 çын çеç тухнă. Иккěмěш кунěнче те 30 çынна яхăн çеç ěçленě. Уйрăм колхозниксем ěçе пěр сăлтавсăрах тухмасăр тăраççě. Обязательнăй йěркепе ěçлесе тумалли ěçкунěсен минимумěн пěрремěш срокри нормине кунта 118 колхозник тултарман. Халě те ěç çаплах пырать. Ольга Федярова колхозница кăçал мěнпурě те 4 ěçкунě çеç тунă. Унăн куллен тимлěн ěçлеме пур майсем те пур. Анчах вăл ěçлемест. Колхоз правленийě ěç вăхăтěнче кахалланса çÿрекенсене пěрне те тивěçлě ответ тыттарман-ха.

Колхозра туллимар вăтам шкул пур. Унти учительницăсем ялхуçалăх ěçне активлăн хутшăнма тивěçлě. Анчах та вěсенчен пěри те халě ěçе хутшăнман. Анисимова, Анчикова, Гордеева, Лебедева учительницăсем ялтах пурăнаççě пулсан та, ěçе тухмаççě, колхозниксем хушшинче агитациллě-массăллă ěçе те туса пымаççě.

Çавăн пекех Буденный ячěпе тăракан колхозра та тырă вырас ěç сÿрěккěн пулса пырать. Чылай колхозниксем ěçе тухмасăр дисциплинăна пăсаççě. Кунта колхозниксем ěçе 9 сехет тěлне çеç тытăнаççě те кěвел аначченех килěсене кěреççě. Чылайăшěсем ěç нормине тултарса ěçлемеççě. Колхоз председателě Максимов çак хěрÿ ěç вăхăтěнче виçě кун хушши ÿсěр çÿрерě.

Х. ЛИСИН.

„Перелом“ колхоз ыраш вырса пěтерчě

КУКЕÇ, августăн 6-мěш. (**Телефонпа**). Паянхи куна районěпе 2955 гектар ыраш вырнă. Ку вăл ыраш вырас плана район 38,2 процент пурнăçлани пулать. «Перелом» колхоз ěнер ыраш вырса пěтерчě, паян авăн çапма тытăнчě. Чылай колхозсенче тырă вырас ěç пысăк çěкленÿпе пулса пырать. Абаш ялсоветěнчи «Урожай» колхоз тырă вырас ěçе лайăх организациленě. Колхозниксем звеносене уйăрăлса ěçлеççě, кашни бригадăрах пěрлешÿллě столовăйсем организациленě. Ěç тухăçлăхне вăйлăн хăпартса пыраççě. Паянхи куна колхоз ырашa 65 гектар вырнă, кулленех 23-шер гектар вырса пыраççě.

«Трудовик» колхозра уборкăн малтанхи кунěсенчен пуçласах жнейкăсемпе кěрепленлě çавасем пěр чарăнмасăр ěçлеççě. Машиноведсем И. Алексеев, Л. Васильев юлташсем жнейкăсемпе куллен 6-шар гектар ыраш выраççě. Колхозницăсем жнейкăсем хыççăн тырра çěмелсене хывсах пыраççě. Сарабакассинчи «Урожай» колхоз та кěрепленлě çавасемпе ăнăçлăн ěçлет. Колхозница П. Васильева кěрепленлě çавапа кулленех çуршар гектар ыраш вырать.

Т. ЛОГИНОВ.

Комсомолецсем уборкăра

ЕЛЧĚК. Августăн 5-мěш тěлне районри колхозсем кěр тыррисене вырас плана 57 процент пурнăça кěртнě. Ялти комсомолецсем 417 çын колхоз производствинче ěçлеççě. Вěсенчен 69 çын машиноведсем, 24 çын бригадирсем, 6 комсомолец колхоз председателěсем. Комсомолецсем нумайěшěсем нормăсене ирттерсе тултарса пыраççě.

Н. ВОЛКОВ.

Силос хывас плана тултарчěç

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Пăлапуç-Нурăс ялсоветне кěрекен «Красная Чувашия» колхоз выльăх-чěрлěх валли силос нумай хатěрлерě. Июль уйăхěнче колхоз силос хывас плана 120 процент тултарчě.

В. ТЕРЕНТЬЕВ.

Уборка вăхăтěнче колхозниксене кино кăтартас ěç

Пропаганда ěçне туса пымалли мелсенчен пěри—кино. Кино кăтартас ěçе чылай районсенче лайăх организациленě.

Вăрçă çинчен калакан картинăсене кăтартмалли уйăхлăхра Главкинопрокатăн Куславккари отделě кинокартинăсем кăтартас тěлěшпе лайăх ěçлерě. Çав отделăн заведующийě ВКП(б) райкомěн пропаганда отделěпе пěрле кинобригада тунă. Ку бригадăна ВКП(б) райкомěн пропагандисчě Герасимов юлташ ертсе пынă. Унта районри хаçат редакцин секретарě Осипов, киномеханик Орлов пулнă. Вěсем 43 хут кино кăтартнă, курма пыракансем 4641 çын пулнă. Çавăнпа пěрлех бригада 31 доклад, 23 калаçу ирттернě. Кашни ялтах плакатсемпе картинăсенчен тунă выставкăна кăтартнă. Стена хаçачěсен редколлегийěсене ěçре пулăшнă. Бригада хăйěн вăйěпе 14 номер стена хаçачě кăларнă.

Çураки вăхăтěнче пěтěмпе республикăра саслă кино кăтартса çÿрекен передвижкăсем—8, ахаль кино кăтартаканнисем 19 пулнă. Вěсем пěтěмпе 437 яла çитнě, 34.727 çынна кино кăтартнă.

Анчах хальхи вăхăтра çавăн пек ěçлени çителěклě мар. Республикăра кино ěçěпе ěçлекен организацисен кинокартинăсем кăтартассине татах лайăхрах туса пыма май пур. Вěсен киноаппаратсемпе кинокартинăсем çителěклě. Çав хатěрсемпе пěлсе тата туллин усă курас пулать.

Тырпулсене пухса кěртнě чухне кино кăтартас ěçе лайăх организацилес тěлěшпе киноработниксем хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчěç, хамăр республикăри районсене нумайěшне саслă кинопередвижкăсем кăларса яма пулчěç. Киноработниксен хăйсен сăмахне пурнăçа кěртес тěлěшпе çине тăрса ěçлемелле.

Главкинопрокатăн Чăваш конторипе кинофикацин ЧАССР Совнаркомě çумěнчи управленийě уборка вăхăтěнче колхозсенче кăтартма чи лайăх фильмсене районсене ярса пачěç. Çав картинăсене ялсем тăрăх кăтартса çÿрес ěçе йěркелесе ярас пулать. ВКП(б) райкомěсен пропагандăпа агитаци отделěсемпе пěрле киноработниксен колхозсенче, уйра, тырă вырнă çěрте, хатěрлев пункчěсенче кино кăтартса çÿремелли маршрут тумалла. Çав маршрут тăрăх передвижкăсем кино кăтартса çÿремелле.

Вăрçă вăхăтěнче кино кăтартмалли вырăн вăл—агитпункт. Унта, кино кăтартнипе пěрлех, докладсем, калаçусем ирттермелле. Çав ěçсене туса ирттерме киноработниксен партипе комсомол организацийěсемпе тачă çыхăнмалла.

Уборка вăхăтěнче ялсенче кино кăтартма хуласенчи механиксене яраççě. Сăмахран, Шупашкарти кинотеатр уборка вăхăтěнче кино кăтартма икě механика, Етěрнерипе Улатăрти театрсем—пěрер механик ялсене яраççě. Çавăнпа пěрлех ěлěк киномеханикра ěçленě çынсене тепěр хут кино кăтартас ěçе куçармалла, ун пек çынсем сахал мар тупăнма пултараççě.

Колхоз правленийěсен председателěсен кино кăтартмашкăн çурт тупма, вырăнсене хатěрлеме, картинăсене турттарса пыма киноработниксене пулăшас пулать.

Ялта кино кăтартас ěçе лайăх организацилесе, колхозниксене оборона фильмěсене, фашизма хирěçле картинăсене нумайтарах кăтартар. Çав картинăсене курнипе совет çыннисем тăван çěршыва тата ытларах юратакан пулěç, гитлерла бандитсене тата ытларах курайми шухăш-кăмăллă пулěç, тăшмана пěтěмпех çапса аркатас вăхăта çывхартассишěн тăрăшса ěçлěç.

А. КАЛИНОВСКИЙ.
Кинофикацин ЧАССР Совнаркомě çумěнчи управленийěн начальникě.

„Восход“ колхоз хăйěн обязательствисене тултарать

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Нăрваш Шăхаль ялсоветěнчи «Восход» колхоз çак кунсенче государствăна иртнě çулхи тырăран 106 центнер ыраш пачě. Колхозниксемпе колхозницăсем государство умěнчи обязательствăсене срокчен парса татма тăрăшаççě.

— Эпир государствăна срокчен тырă, аш-какай, сěт-çу, укçа-тенкě парса тăни нимěç оккупанчěсене хăвăртрах çапса аркатма пулăшать, — тет колхоз бригадирě Е. Павлова юлташ. Вăл 1942 çулшăн хăйěн хуçалăхне тивекен ялхуçалăх налогне извещени иличченех тÿлесе татрě. Унăн примерěпе колхозниксен тата 15 хуçалăхě ялхуçалăх налогне пěтěмěшпех парса татрě.

Колхоз çăмартa, аш-какай, çăм обязательствисене те парса татнă. Халě 1943 çулшăн аш-какай пама тытăннă.

И. МИТРОФАНОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 6-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

ринче кĕрешекенскер, чугунçулăн пысăк станцийĕ çине пырса тапăннă. Пĕр сехете яхăн пынă çапăçура партизансем 40 оккупанта тата темиçе вуншар полицейские пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем вокзала, комендатура çуртне, нимĕç офицерĕсем пурăннă 4 салон-вагона, грузсем тиенĕ 42 товарнăй вагона çунтарса янă, чугунçулăн стрелкисене взрыв туса сирпĕнтернĕ.

* * *

Нимĕçсен 35-мĕш пехотнăй дивизийĕн 111-мĕш полкĕнчен тыткăна парăннă салтак Вильгельм Б. çапла каласа панă: «Германи войскисем Хĕвелтухăç фронтĕнче тÿсекен çухатусем çинчен нимĕçсен командованийĕ паракан официальнăй даннăйсем халăха тарăхтараççĕ. Çак цифрăсене никам та ĕненмест. Çавăн пек ĕпенменнин сăлтавĕсем нумай. Германири тата вăл оккупациленĕ çĕршывсенчи мĕнпур госпитальсем аманнисемпе тулса ларнă. Кирек мĕнле пысăк мар поселокри вуншар çемьесем хăйсен сывăх çыннисемпе тăванĕсем пĕтни çинчен пĕлтерекен извещенисене куллен илсе тăраççĕ. Эпĕ хам Филлингенран. Çав хулара пурăнакансем 8.000 çын шутланнă. Унти çынсенчен 350 çын Российăра вилнĕ. Нумайĕшĕсем аманнă, хăшĕ-пĕрисем чăлахсем пулса таврăннă. Пĕр хыпарсăр çухалнисем мĕн чухлĕ-ши? Вăрçă хăшĕнне-пĕринне кусĕсене усрĕ тата гитлерла режим Германи халăхне мĕн кÿнине кăтартса пачĕ. Анчах нумайĕшĕсем халлĕхе мĕн те пулин усçăн калама шикленеççĕ. Гитлерăн тĕрекĕ эсэсовецсемпе штурмовиксем пулса тăраççĕ. Вĕсем—тĕксĕм чунлă çынвĕлеренсем, вĕсем паян вырăссене, поляксене, чехсене вĕлереççĕ тата вĕсем мĕнпур тĕнчене юн ăшне путарма хатĕр тăраççĕ. Вĕсене пĕтерсе тăкмалла, мĕншĕн тесен вĕсем çынсем мар, палачсем».

* * *

Югослави партизанĕсем Италипе Германи захватчикĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Юн тăкăнакан çапăçу хыççăн патриотсем Хорватире Ключ хулине тата çывăхри темиçе яла йышăнса илнĕ. Итали салтакĕсене 70 çынна вĕлернĕ тата 100 çынна ытла амантнă. 100 винтовка. 3 миномет, 300 мина, 5.000 патрон тата ытти хĕçпăшалсем тытса илнĕ. Грмич тăвĕ патĕнчи çапăçура партизансем оккупантсен атакине сирсе пăрахса, вĕсене пысăк çухатусем тÿстернĕ. Партизансем енче «Юнкерс-88» йышши икĕ бомбардировщик кĕрешнĕ, вĕсене партизансем нимĕçсен аэродромне çапса аркатнă чухне тытса илнĕ пулнă.

Пирĕн землянксем

Снайпер В. И. Коновалов

Василий Иванович Коновалов Хĕрлĕ Çар ретне Çĕрпÿ районĕнчи Елаш ялĕнчен кайнă. Хĕрлĕ Çарта вăл çар ĕçне вĕренме пĕтĕм чунтан тăрăшнă. Винтовкăпа пеме, снайпер приборĕпе усă курма, гранатăсене тата горючи тултарнă бутылкăсене ывăтма отлично вĕреннĕ. Çавăн пекех вăл строевой, тактически занятисенче, караульнăй службă правилисене вĕреннĕ çĕрте «отлично» паллăсем илнĕ.

В. И. Коновалов пăшалпа тĕл пеме пĕлнине кура, ăна снайпер тунă.

Апрелĕн 20-мĕшĕнче Коноваловсен подразделенийĕ фронта çитнĕ. Унтанпа Коновалован фронтри пурнăçĕ пуçланнă. Вăл нимĕç захватчикĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче мĕн пек тискерлĕхсем туса хăварнине курнă.

«Чăваш Коммуни» хаçатăн редакцине янă çырура Коновалов юлташ çапла çырать: «Нимĕçсем вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенче тискер кайăкран та тискеррĕн хăтланнине эпир кунта хамăр куçпа куртăмăр. Гитлерла мерзавецсенчен ирĕке кăларнă совет районĕсенче çакна курма пулать: тăшман ялсемпе колхозсене çунтарса янă, хĕрарăмсене, ача-пăчасене вĕлерсе, çаратса пĕтернĕ. Çаксене курсан, эпир нимĕç захватчикĕсем çине çавтери тарăхса çитрĕмĕр. Эпир çав тискер кайăксене хирĕç пăшалпа, гранатăпа, штыкпа ответлетпĕр. Вăрçă ĕçне лайăх вĕренни мана фронтра паттăррăн та хăюллăн çапăçма пулăшать.

Чăн та, Василий Иванович фронтра тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçать. Фронтăн малти лининче çапăçса, фашистсен салтакĕсене пĕтерсе пырать. Пĕррехинче, вĕсем пиллĕкĕн, пурте снайперсем, малти лининче пулса, тăшмана хирĕç сакăр кун хушши çапăçнă. Çак вăхăт хушшинче вĕсем 49 гитлеровеца вĕлернĕ тата 64 гитлеровеца амантнă. Çав кунсенче пулса иртнĕ çапăçусенче Коновалов юлташ хăйĕн снайперла винтовкинчен тĕл персе 14 гитлеровеца вĕлернĕ. Ун çинчен фронтра тухакан «За отечество» ятлă хаçатра çырнă. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн В. И. Коновалов юлташа «За отвагу» медаль парса наградăланă.

Редакцине янă çырура Коновалов юлташ çапла çырать:

«Эпĕ 14 фрица, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене, персе вĕлертĕм. Анчах эпĕ çакăнпах чарăнса тăмастăп. Фашистла ирсĕрсене хамăрăн тăван çĕршыв çинчен хăваласа кăларичченех, хамăн юлашки юн тумламĕ юлмиччене кĕрешме пулатăп. Совет Союзĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхлассинчен пысăк та хисеплĕ ĕç урăх çуккине ăнланса илсе, совет воинĕн обязанноçне чыслăн пурнăçласа пырăп.

Колхозниксемпе колхозницасем! Эпир хамăрăн чечекленекен колхозсем çинчен манмастпăр, вĕсене сыхласа хăварассишĕн мĕнпур вăя хурса кĕрешетпĕр. Сирĕн те тылра пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлес пулать».

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Хĕрлĕ ялава хамăр аларах хăварассишĕн

КАНАШ, августăн 5-мĕш. (Телефонпа). «Авангард» промартель чылайранпа ĕнтĕ йĕркеллĕ ĕçлет, ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсене сахал мар туса кăларать. Социализмлă ăмăртăва хутшăнса артель коллективĕ хăйĕн çине татăклă обязательствăсем илчĕ, ытти артельсене ăмăртăва чĕнчĕ.

Унтанпа икĕ уйăх иртрĕ, коллектив хăйĕн обязательствисене пурнăçлассишĕн ырми-канми ĕçлерĕ. Июнь уйăхĕнчи плана артель срокчен тата ытлашшипех тултарчĕ, ăмăртура мала тухрĕ, промкоопераци енĕпе республикăри куççа çÿрекен Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Хĕрлĕ ялава илсе, артельри рабочисемпе служащисем июль уйăхĕнче татах та лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç. Вĕсен сăмахĕ пурнăçа кĕчĕ: артель иртнĕ уйăхри плана мĕнпур продукцисене туса кăларас енĕпе 104 процент, ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе 116 процент тултарчĕ. Кĕрпек-чÿлмексем тăвас, атă-пушмаксем çĕлес енĕпе плана икĕ хута яхăн, пахча-çимĕçсем туса илес енĕпе тăватă хут ытла ирттерсе тултарнă. Çапла вара, июль уйăхĕнчи ăмăртура кĕрпек-чÿлмексем тăвакан, атă-пушмаксем çĕлекен тата çăвĕ çĕлекен цехсем мала тухрĕç. Çĕвĕ çĕлекен цехри Михайлова, Балабанов стахановецсем нормăпа пăхнинчен икĕ хут тухăçлăрах ĕçлерĕç. Кузнецовăпа Коровина бригадисем те пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартрĕç. Çакăн пек ĕçлекен стахановецсен ретне июль уйăхĕнче 15 çын хутшăнчĕ.

М. СТЕПАНОВ.
Правлени председателĕн заместителĕ.

Артельсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермелле

ЕТĔРНЕ, августăн 6-мĕш. (Телефонпа). Социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн Етĕрнери торф кăларакан предприяти (директорĕ Бритвин юлташ) тухăçлăрах ĕçлеме пуçларĕ, июль уйăхĕнчи ĕç планне ытлашшипех тултарчĕ. Кунти рабочисем пурте пекех нормăна тултарса ĕçлеççĕ, стахановецсем икшер норма тăваççĕ.

Районри артельсенчен июль уйăхĕнче «Красный яр» артель (правлени председателĕ Цветков) лайăх ĕçлерĕ. Вăл уйăхри плана ăнăçлăн тултарчĕ. Артель коллективĕ колхозсем валли урапа кустăрмисем 70 стан, икĕ пине яхăн кĕреплеллĕ çавасем хатĕрлесе пачĕ. Çак кунсенче «Первое мая» артель те урапа çĕрмелли мазь 3 тонна туса кăларчĕ. Артельсем çавăн пек куллен кирлĕ таварсем туса кăларни колхозсене тырпул пухса кĕртес ĕçре пысăк пулăшу парать.

Анчах районри промкомбинат (управляющийĕ Никитин юлташ) çаплах начар ĕçлет, уйăхран уйăха плана тултараймасть. Катка-пичке туса кăларас ĕç рабочисем çук пирки чарăнса тăрать. Хĕрарăмсемпе çамрăксенчен кадрсем хатĕрлесси çинчен промкомбинат руководителĕсен шутласа пăхмалла ĕнтĕ.

Сталин ячĕпе тăракан артель те иртнĕ уйăхри плана тултараймарĕ.

ГУБЕРМАН,
Райплан председателĕ.

РАЙОНРИ ХАÇАТСЕНЧЕН

ТРАНСПОРТ БРИГАДИ ТУНĂ

Лаш Таяба колхозĕнче (Елчĕк р.) тырпул тата пахча-çимĕç турттарма транспорт бригади тунă. Çак бригадăра 18 лав.

(«Колхоз ялавĕ»).

ГОСУДАРСТВĂНА УТĂ ПАРСА ТАТНĂ

Асанкассинчи «Двигатель революции» колхоз (Комсомольски р.) государствăна утă пĕтĕмпех парса татрĕ.

(«Октябрь ялавĕ»).

Ют çĕршывсенче

США-ри общественность иккĕмĕш фронта халех уçассишĕн

НЬЮ-ЙОРК, августăн 5-мĕш. (ТАСС). Америкăри Ĕç Федерацийĕн нумай профсоюзĕсем иккĕмĕш фронт уçма ыйтни çумне хутшăнаççĕ. Нумаях пулмасть Нью-Йоркра пулса иртнĕ массăллă митингра Америкăри Ĕç Федерацийĕн председателĕ иккĕмĕш фронт тума ыйтакансем майлă тухса каланă. Августăн 2-мĕшĕнче Чикагори производствăллă профсоюзсен конгресĕн центрĕ (КПП) митинг туса иртгернĕ. Митингра 30.000 çын пулнă. Митингра автомобиль промышленноçĕпе авиапромышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн председателĕ Томас, çар профсоюзĕн секретарĕ Аддес тата ыттисем те тухса каланă.

Çав митинграх Чикаго хулин мэрĕ Келли, представительсен палатин членĕн кандидачĕ Доуссон тата Чикагори профсоюзсен паллă темиçе деятелĕ тухса каланă.

Унта Америкăпа Англи войскисене халех Европа континенчĕ çине кĕртсе яма ыйтса резолюци йышăннă.

Вашингтонра 1.200 çынлă митинг пулса иртнĕ. Сенатор-демократ Пеппер сăмах тухса каланă. Тухса калакансем пурте иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтнă.

Мильвока хулинчи КПП профсоюзĕн 70 организацийĕн представителĕсем, 70.000 рабочи ячĕпе, пуринчен ытларах çар предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисен ячĕпе, Рузвельт патне телеграмма янă. Çав телеграммăра çапла каланă: «Пирĕн ачасен, пирĕн арăмсен, пирĕн тăван кил-çуртсен ячĕпе, пирĕншĕн мĕн хаклă, çавсен пурин ячĕпе те, Европăра халех иккĕмĕш фронт уçмалла. Çав ĕçе вăраха ярса пыни катастрофа пулассипе хăратать. Вăрçă çĕнтерÿ тунипе кăçалхи çулах вĕçленмелле».

Железнодорожниксен США-ри чи пысăк профсоюзĕнче тăракан рабочи Унтли совет железнодорожникĕсем патне железнодорожниксен кунĕ ячĕпе янă хăйĕн саламĕнче çапла çырать: «Профсоюзăн 178.000 членĕ ячĕпе паттăр совет халăхне вăл мĕнпур этемлĕх тăшманне хирĕç геройла кĕрешнĕшĕн саламласа, эпир çакна шанса тăни çинчен калатпăр: Гитлера хирĕç иккĕмĕш фронт уçăлас кун инçе мар, çав кун вăл фашистла вăрă-хурахсен вилĕмне хăвăртрах çывхартĕ, чуралăхри халăхсене ирĕке кăларас саманта çывхартĕ».

Англи çар служащийĕн çырăвĕ

ЛОНДОН, августăн 5-мĕш. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат хăйĕн обозревателĕн Каммингсăн статьине пичетлесе кăларнă. Вăл хăйĕн статьинче: иккĕмĕш фронт уçас ыйту çинчен «пĕтĕм тĕнчери миллионшар çынсем калаççĕ», тесе çырать.

Çак ыйту çине Англи çарĕ мĕнле пăхнин тĕслĕхне кăтартса парас майпа Каммингс хăйĕ нçарти тусĕнчен килнĕ çырăва илсе кăтартать. «Пирĕн çар çапăçманни пирки салтаксем питех те хумханаççĕ,—тесе каланă çырура.— Эпир хаçатсем сайра-хутра кăна куратпăр тата радио тăрăх паракан хыпарсене татăк-кĕсĕкĕн кăна илтетпĕр. Ростов е Воронеж çинчен калакан пĕлтерÿсене вуланă чухне çынсем тĕлĕнмелле шăпланаççĕ. Кун пек чухне Египет та иккĕмĕш вырăна куçать. Британири радиовещани компанийĕ Ла-Манш çинчи кĕрешĕве иккĕмĕш фронт пек туса кăтартма хăтланнисене илсен, çав передачăсене никам та итлемест».

Итальянецсемпе нимĕç оккупанчĕсене хирĕç Югослави партизанĕсем ăнăçлăн кĕрешеççĕ

ЖЕНЕВА, августăн 5-мĕш. (ТАСС). Юлашки икĕ эрне хушшинче Словени районĕнче Югослави партизанĕсемпе Итали тата Германи оккупанчĕсем хушшинче вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Июлĕн 15-мĕшĕнче Италин 4 дивизийĕ Словенин чылай районĕсем çине наступлени пуçласа янă. Çав районсене Югослави партизанĕсем ирĕке кăларнă пулнă. Италин авиацийĕ, нумай ялсем çине хаяррăн вĕçсе пырса тапăнса, темиçе çĕршер бомба пăрахнă. Вунă яла тĕппипех çунтарса янă.

Партизансен отрячĕсем çирĕп оборона организациленĕ, темиçе участокра оккупантсене вăйлăн пыра-пыра çапнă. Пĕр участокра партизансем контрнаступление куçса, вăйлă çапăçусем хыççăн Жужемберг хулине йышăнса илнĕ.

Козар тăвĕсен районĕнче те çавăн пекех вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Çапăçăва икĕ енчен те пысăк вăйсем хутшăннă. Оккупантсем авиаципе, танксемпе тата артиллерипе усă курнă. Противник çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен вăйлăрах пулнă пулин те, Югослави партизанĕсем противникăн пур атакисене те сире-сире пăрахнă тата нумай вăхăт хушши пынă çапăçусем хыççăн противника ирĕксĕрех каялла чактарнă. Италипе Германи войскисен 5.000 çын ытла вилсе тата аманса пĕтнĕ, оккупантсем 7 танк тата темиçе оруди çухатнă. Партизансем противникăнне танксене хирĕç пемелли 3 тупă тата 2 полкăн ялавĕсене тытса илнĕ. Контрнаступление малалла ăнăçлăн туса пырса, партизансем противника, Босанск—Костайница хули еннелле чакаканскере, хыçран йĕрлесе хăвалаççĕ.

Вăрă-хурахсемпе çапкаланчăксен „легионĕ"

СТАМБУЛ, августăн 4-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсем тĕрĕслесе тăнипе Парижра тухакан «Иллюстрасьон» журнал хăшпĕр даннăйсем пичетлесе кăларнă, çав даннăйсем тăрăх, Виши правительстви активлăн пулăшнипе нимĕçсем иртгерекен ĕç—Совет Союзне хирĕç кĕрешмĕшкĕн «большевиксене хирĕçле легион» тума «добровольцсем» пухас ĕç пĕтĕмĕшпех путланса ларнă. Журнал кăтартса панă тăрăх, Францин икĕ зонинче уçнă 160 бюро июнĕн вĕçĕ тĕлне пĕтĕмпе те 239 çын çеç пухнă.

«Легион» валли пухнă 239 «добровольцсем» мĕнле çынсем пулса тăраççĕха? «Иллюстрасьон» журнал çапла палăртать: «добровольцсен» 90 процентĕ унăн «мĕнле професси пурри çинчен панă ыйтăва ответлемест». «Франци халăхĕ,—тесе çырать «Иллюстрасьон»,— добровольцсене çапкаланчăксемпе вăрă-хурахсем хушшинче пухнине пĕлсе тăрать».

Легион валли пухнă çапкаланчăксен казарминче пурнăç вăрă-хурахсен йăвинчи пек курăнать. Нумаях та пулмасть нимĕç командованийĕ казармăра пулнă врача—француза ĕçрен кăларса ун вырăнне нимĕç врачне лартнă, мĕншĕн тесен кирек мĕнле службăран та пăрăнма тăрăшакан «добровольцсем» хушшинче массăллă «чир-чĕрсем» пуçланса кайнă. «Добровольцсен» шухăшкăмăлне илес пулсан вара,—тесе çырать журнал,—эпир ун çине шанчăксăррăн пăхатпăр. Легиона çырăннă чухне добровольцсем авантюра тăвас, пуяс, хăйсен йĕррине çухатас тата ытти ĕмĕте асра тытнă». Журнал йышăннă тăрăх, «нимĕç тумтирне тăхăннă добровольцсем урам тăрăх иртсе пынă чухне вĕсем çине пурте кураймасăр тарăхса ним чĕнмесĕр иртсе каяççĕ».

Лотерея билечĕсене вырнаçтарассине хăвăртрах вĕçлемелле

Республикăн пур районĕсенче те укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене вырнаçтарас ĕç малалла пырать. Августăн 6-мĕш тĕлне республикăра 14.942.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем 3.445.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем 11.497.000 тенкĕлĕх çыраннă.

Билетсене сарас ĕç Шупашкар хулинче, Сĕнтĕр, Шупашкар, Шăхасан, Елчĕк, Чкаловски районсенче уйрăмах ăнăçлăн иртрĕ.

Колхозниксемпе единоличниксем билетсене илме çыраннă вăхăтрах укçине те тÿлеççĕ. Калинински, Первомайски, Сĕнтĕр, Шăхасан районĕсенчи колхозниксемпе единоличниксем пĕтĕмпех пухса панă. Елчĕкпе Чкаловски районсенче колхозниксемпе пĕрлех рабочисемпе служащисем те тÿлесе татнă. Республикăра лотерея билечĕсен укçине пĕтĕмпе 11.194.000 тенкĕ пухнă. Укçа пухас енĕпе Советски, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар тата Йĕпреç районĕсем юлса пыраççĕ. Йĕпреç районĕнче билетсене сарас ĕçе те вĕçлеменнĕ.

Юлса пыракан районсенчи партипе совет организацисен, финанс отделĕпе перекет кассисен задачи лотерея билечĕсене вырнаçтарассине çитес кунсенчех ăнăçлăн вĕçлесе, укçине те пĕтĕмпех пухса çитересси пулать.

А. МИХАЙЛОВ.
ЧАССР перекет кассисемпе Госкредит Управлени начальникĕн заместителĕ.

—⊙—

ПРОИЗВОДСТВĂРА ĔÇЛЕНĔ ВĂХĂТРАХ АСЛĂ ШКУЛТА ВĔРЕНМЕ ПУЛАТЬ

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяр вăрçă пынă вăхăтра та большевиксен партийĕ тата правительство пирĕн çамрăксене вĕрентессишĕн çине тăрса тăрăшаççĕ. Партипе правительство постановленийĕ тăрăх, çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче аслă шкулсенчи студентсене ĕçе илмешкĕн предприятисемпе учрежденисен руководителĕсене ирĕк панă. Аслă шкулта вĕренекен студентсене производствăра кунне 4—6 сехет хушши ĕçлеттерсе, çав ĕçшĕн ĕçукçи тÿлесе пымалла. Çакă вара, производствăра ĕçленĕ чухнех аслă шкултан вĕренсе тухма тăрăшакансемшĕн чылай пысăк пулăшу пулать.

Студентсем валли çавăн пек йĕрке туни çинчен çамрăксене анлăн ăнлантарса памалла. Ун чухне вара пирĕн çамрăксем хушшинче производствăра ĕçленипе пĕрлех аслă шкулсенче вĕренме шутлакансем ытларах пулĕç.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ производствăра ĕçлекенсене вĕренме илнипе пĕрлех, ытти хуласенчен тата ялсенчен института вĕренме кĕрекенсене те ĕç тупса пама тăрăшать. Çакăнпа пĕрлех институтра занятисен расписанине студентсем производствăра ĕçленине, вĕсен ĕçрен пушаннă вăхăтра вĕренмеллине шута илсе тăваççĕ.

Совет çамрăкĕсене аслă шкулсенче вĕренме явăçтарасси тата ĕçпе вĕренĕве сыхăнтарса пырасси политика тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăрать. Çапах та хăшпĕр учрежденисен руководителĕсем хăйсем патĕнче ĕçлекен сотрудниксене аслă шкула кĕме чараççĕ. ЧАССР Наркомземĕн çĕрйĕркелÿ управленийĕнче ĕçлекен Еремеева юлташ чăвашсен ялхуçалăх институтне вĕренме кĕресшĕн, анчах çĕрйĕркелÿ управленин начальникĕ Данилов юлташ ăна вĕренме ямасть.

Вĕренме шут тытнă çамрăксем çине çавăн пек пăхма юрамасть. Аслă шкулсене вĕренме кĕнĕ рабочисемпе служащисене пурне те вĕренме кирлĕ условисем туса памалла.

Чăвашсен ялхуçалăх институтне вĕренме кĕме хатĕрленекенсем валли курс уçнă. Çав курса вăтам шкултан 1941 çулччен вĕренсе тухнисене, çавăн пекех вăтам шкултан вĕренсе тухайманнисене илеççĕ. Курсри занятисене вĕренĕве ĕçпе çыхăнтарса пырассине шута илсе иртгереççĕ.

ГЕРАСИМОВИЧ.
Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн директор заместителĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Гравиоразработке срочно требуются старший бухгалтер и инженер-горняк или техник. Условия по договоренности.

Обращаться по адресу: ст. Тюрлема, дер. Казакова, Гравиоразработка.

Сбежала кобыла, 1937 года рождения. Рост — 132 см. Кличка — «Воронка». Вороной масти, на лбу звездочка с проточиной, задние коленчики в чулках.

Знающих местонахождение просим сообщить по адресу: Ишлейский район, Янгильдинский с. совет, правление колхоза им. Калинина.

РАЗЫСКИВАЕМ ЛОШАДЬ.

Приметы: масть вороная, рост 135 см. на лбу звезда (белая). кличка «Казбек», рождения 1936 года. Пропала 19 июля в г. Чебоксарах.

Знающих о местонахождении ее просим сообщить за вознаграждение по адресу: п/о Тораево, Светского района, Чувашской АССР, Чуманкасинский с/с., правлению Шербашевского колхоза «Искра».

ВКП(б) райкомĕсен инструкторĕсем тата вĕсемпе ĕçлесси

Парти райкомĕпе пуçламĕш организацисен хушшинчи çыхăнăва çирĕплетесси, парторганизацисен секретарĕсене ĕçре пулăшса пырасси, çитменлĕхсене вăхăтра палăртса, вĕсене пĕтерме пулăшасси, парти ĕçĕнчи лайăх опыта ытти организацисене куçарасси — райком инструкторĕн тĕп ĕçĕсем. Инструктор—парти комитечĕн ответлă представителĕ. Вăл хăйне уйăрса панă пуçламĕш организацисенчи парти ĕçĕшĕн ответ тытма тивĕçлĕ. Вăрçă вăхăтĕнче инструкторăн ролĕ татах та ытларах ÿсрĕ.

ВКП(б) райкомĕсен инструкторĕсем нумайĕшĕсем хăйсен задачисене тĕрĕс ăнланса, пуçламĕш парторганизацисене нумай пулăшаççĕ, парторганизацисен секретарĕсене ĕçри ыйтусене тĕрĕс татса пама канашсем параççĕ, ĕçлеме вĕрентеççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем тивĕçлĕ ыйтăва райкомра сÿтсе явма лартаççĕ.

Анчах парти ĕçне хальхи вăхăт ыйтнă пек йĕркелесе пыман инструкторсем те пур-ха. Сăмахран, ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн инструкторĕсен ĕçнех илер. Райкомра штат тăрăх 6 инструктор пулмалла, халĕ 5 инструктор ĕçлет, вĕсенчен виççĕшĕ — парти ĕçĕнче кăçалхи февраль-март уйăхĕсенчен пуçласа кăна тăраççĕ.

Паллах ĕнтĕ, партин Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕсемпе отделсен заведующийĕсен инструкторсене ĕçре ыт[illegible] пулăшса пымалла, ĕçлеме вĕрентмелле. Анчах райком парти ĕçĕн ыйтăвĕсем тăрăх инструкторсемпе канашлусем пĕрре те иртгермен. Инструкторсене колхозсенче тата ялсоветсенче уполномоченнăй пулса ĕçлеме уйăрсан кăна хуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх вĕсемпе канашлусем иртгернĕ.

Инструкторсене пуçламĕш парторганизацисем çумне çирĕплетмен, вĕсене хăш участокра ĕçлемеллине, мĕнле ĕçшĕн ответ тытмаллине кăтартса паман. Вĕсем яланах райком секретарĕсемпе отделсен заведующийĕсен уйрăм поручениĕсене пурнăçа кĕртессипе ĕçленĕ. Инструкторсемпе ĕçре çавăн пек усă курнине пула, вара вĕсем райкомпа райисполкомăн штатлă уполномоченнăйĕсем пулса тăнă. Оргинструкторски отделĕн инструкторĕ Щеренкова юлташ вăрман хатĕрлессипе, çулйĕр тăвассипе тата çуракине иртгерессипе уполномоченнăй пулса ĕçленĕ. Инструктор Петров юлташ май тата июнь уйăхĕсенче парти ĕçĕпе пĕр пуçламĕш парторганизацире те пулман.

Райкомра кашни инструкторăн ĕçне шута илсе пыни çук. Инструкторсем час-часах пĕр-пĕр задание пурнăçа кĕртме çÿреççĕ, анчах çав задание пурнăçа кĕртме вăл мĕн чухлĕ вăхăт иртгернине никам та шута илмест. Çапла вара инструкторсен ĕçне контрольлесе пымаççĕ.

ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕ инструкторсемпе ĕçлемени, вĕсемпе тĕрĕс усă курманни вара партин политикăллă ĕçĕ вăйсăрланасси патне илсе çитерчĕ. Пуçламĕш парторганизацисенче чылайĕшĕнче парти ĕçĕ начарланнă. Хутар ялсоветĕнчи тата райсовет исполкомĕнчи пуçламĕш парторганизацисенче 3—4 уйăх хушшинче те парти пухăвĕсем пĕрре те пулман. «Большевик» колхозри организацире парти пухăвĕсем политика тĕлĕшĕнчен кирлĕ пек вичере пулса ирмеççĕ. Парти пухăвĕсем мĕнле иртнине инструкторсем контрольлесе пыни çук, пухусен протоколĕсене вăхăтра райкома тăратнине тĕрĕслесе пымаççĕ. Çавна пула парти пухăвĕсен решенийĕсене типтерсĕр çырни, хăшпĕр чухне тата пухусенче тĕрĕс мар решенисем йышăнни пулнă. Пуçламĕш парторганизацисем нумайĕшĕсем парти ретне çĕнĕ членсем илессипе япăх ĕçлеççĕ.

Пуçламĕш парторганизацисене пырсан, инструкторсем вĕсен ĕçне тĕплĕн пĕлсе çитме тăрăшмаççĕ. Петров инструктора «Комбинат» колхозри тата Хутар ялсоветĕнчи пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсене тĕрĕслеме хушнă пулнă. Петров юлташ çав парторганизацисенче миçе пуху пулни, колхозниксем хушшинче миçе калаçу иртгерни çинчен йĕркипех çырса тухнă. Анчах вăл çав организацисем партин политикăллă ĕçне хуçалăхлă ĕçсемпе мĕнле çыхăнтарса пыни çинчен, парторганизацисем колхозсен хуçалăх ĕçĕсене тĕплĕн пĕлсе çитсе, вĕсенче партипе правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртес, хуçалăх задачисене пурнăçа кĕртес ĕçсене мĕнле ертсе пыни çинчен, колхоз тата ялсовечĕ мĕншĕн япăх ĕçлени çинчен ним те çырман.

ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн инструкторсемпе ĕçлессине тĕпренех лайăхлатмалла. Инструкторсем хăйсен участокĕсенчи пуçламĕш парторганизацисен пур ĕçĕсемшĕн те ответлă пулччăр. Кунта пуçламĕш парторганизаци япăх ĕçленине палăртса, ун çинчен райкома пĕлтернипех çитмест. Инструкторăн пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене ĕçре чăн-чăн пулăшу памалла. Асра тытас пулать: инструктор—фактсене çырса çÿрекен регистратор е ĕçе тĕрĕслекен ревизор мар, инструктор — парти решенийĕсене, политикăллă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешекен работник. Инструктор пуçламĕш парторганизацие пырса докладной записка е акт çырни кăна пачах та çитменлĕксĕр, вăл парторганизацин ĕçне лайăхлатма пулăшни ĕçĕн результачĕсенче курăнтăр. Инструктор хăйĕн çумне çирĕплетнĕ пуçламĕш парторганизацисен пурнăçне лайăх пĕлсе тăтăр, парти пухăвĕсен протоколĕсене, информацисене тĕплĕн вулатăр, колхозсемпе ялсоветсем хуçалăх задачисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине çийĕнчех пĕлме тăрăштăр. Çаксене пĕлнипе инструкторăн кашни пуçламĕш парторганизацие партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăхлатма пулăшас пулать.

ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен секретарĕсен инструкторсене ĕçлеме вĕрентсе пырас пулать, вĕсен ĕçри квалификацине ÿстерме, политикăллă пĕлĕвĕсене пысăклатма пулăшмалла, инструкторсен ĕçне тĕрĕс организацилесси, вĕсемпе тĕрĕс усă курасси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла.

Д. ТАЛДЫКИН.
ВКП(б) Обкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ.

Турцин çĕнĕ посолĕ ССР Союзне килме тухнă

АНКАРА, августăн 4-мĕш. (ТАСС). Турцин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолĕ пулма çĕнĕрен уйăрса лартнă г. Джеват Ачикалын паян Анкараран ССР Союзне килме тухнă. ССР Союзĕнче посол пулма уйăрса лартиччен г. Ачикалын Турцин ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин генеральнăй секретарĕн пĕрремĕш заместителĕн постне йышăнса тăнă пулнă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 904

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. п.